## Ноябрĕн 10-мĕшĕнче – Милици кунĕ



# Право сыхлавĕн хуралĕнче

***Милици кунĕ – çулталăкри пысăк пĕлтерĕшлĕ уявсенчен пĕри тесен те йăнăш мар. Мĕншĕн тесен милици сотрудникĕн тивĕçĕ - обществăлла йĕркелĕхе сыхласси, граждансен сывлăхĕпе пурнăçне, Конституципе панă прависене хӳтĕлесси йăлтах пакунлă çынсемпе çыхăннă. Çак тивĕçсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлани вара халăхра чи кирлине - шанчăк тата хисеп çуратать.***

***Пытарма кирлĕ мар, «милици» сăмах кашни çыннах тĕрлĕрен шухăшлаттарать: сиввĕн те, чунтан тав туса калаçакансем те пур. Çапах та мĕн те пулин сиксе тухсан пурин те аллисем çийĕнчех «02» номерпе шăнкăравлаççĕ. Апла милицие шанни куçкĕретех.***

***Ĕплерех лару-тăру-ха ку тĕлĕшпе пирĕн районта? Çак ыйтăва уяв умĕн Муркаш районĕн шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхне Евгений Дмитриевич МАКАРОВА патăм.***

– Тӳрех каламалла, право тата обществăлла йĕркелĕхе сыхлассин тĕп пайĕ районти шалти ĕçсен пайĕ çине лекет. Çак ĕçе вара эпир чăнах та тивĕçлипе, яваплăхпа тата ĕç пахалăхне ӳстерсе пурнăçлама тăрăшатпăр. Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерстви пирĕн ĕçе «юрăхлă» тата «юрăхсăр» тесе хак пама пултарать. Юлашки 5 çул хушши ĕнтĕ министерство Муркаш районĕн шалти ĕçсен пайĕн ĕçне «юрăхлă» тесе çирĕплетет. Кун пирки пирĕн районта юлашки 6-7 çул хушшинче преступленисен шучĕ чакса пыни те уççăнах калать. Сăмахран, пĕлтĕрхи 10 уйăхра пурĕ 510 преступлени пулнă пулсан, кăçал – 413.

**– Преступленисене уçса парассипе вара кăтартусем мĕнлерех?**

– Преступленисене уçса парассипе те япăх ĕçлесе пымастпăр. Вĕсене уçса парасси кăçал 78,7 процентпа танлашать. Республикăри вăтам кăтарту – 63,4 процент. Танлаштарса пăхма йывăр мар. Çакă пирĕн сотрудниксем хăйсене шаннă ĕçе кунне-çĕрне пăхмасăр, тимлесе тата тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланинчен килет. Апла пулсан пĕтĕмлетӳсем те тӳрремĕнех курăнаççĕ. Преступленисене вăхăтра уçса пани экономика енĕпе те хăйне май эффективлăх тытса тăрать. Вăрланă пурлăха тата укçатенкĕне эпир яланах хуçисене тавăрса паратпăр. Ку цифра çулталăк пуçланнăранпа 8 млн. тенкĕрен те иртрĕ. Пĕчĕк мар сумма.

Тĕслĕхрен, çак эрнерех К. Иванов ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн машинăпа трактор паркĕнчен Т-150 тракторăн вăрланă икĕ аккумуляторне (вĕсем йӳнĕ тăмаççĕ) тавăрса патăмăр. Çак преступление уçас тесе пирĕн сотрудниксем çĕрĕпех ĕçлерĕç. Ытти чухне те вĕсем вăй-хална те, вăхăтне те шеллемеççĕ. Акă çулла пĕр КамАЗ автомашинăна вăрласа кайнăччĕ, ăна та хуçи патне каялла çитертĕмĕр.

**– Преступленисен хисепĕ чакса пыни курăнать, çул çитмен çамрăксем тăвакан преступленисем пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Паянхи кун тĕлне çул çитменнисем тăвакан преступленисен хисепĕ 14-па танлашать. Пĕлтĕр вара пурĕ ачасем çак тапхăрта 42 преступлени тунă. Профилактика ĕçне вăйлатни хăйĕн витĕмне кӳрет. Çапах та ку пулăм лăпланмаллине пĕрре те пĕлтермест. Малалла та çанă тавăрсах ĕçлемелле, çитĕнекен ăрăва криминаллă пурнăçран сыхламалла. Вĕсем тунă преступленисем ытларах кĕсье телефонĕсене вăрланипе çыхăннă. Ытти грждансен преступленийĕсене тишкерес пулсан та, ют харпăрлăха вăрлани нумайрах.

**– Евгений Дмитриевич, терроризмла тата экстремизмла характерлă преступленисем ан пулччăр тесе шалти ĕçсен пайĕ мĕнлерех ĕçлесе пырать?**

– Терроризмла тата экстремизмла характерлă, çавăн пекех наркотиксемпе тата хĕç-пăшалпа тăвакан саккунсăр суту-илӳ çаврăнăшĕпе кĕрешесси, профилактика ĕçĕсене туса пырасси те пирĕн пайра пысăк пĕлтерĕшре. Ку енĕпе те тăрăшсах ĕçлетпĕр. Сăмахран, Республика кунне уявлас умĕн Муркашра пурăнакан çыннăнне патронсем, револьвер тата взрыв тумалли пакетсем туртса илтĕмĕр. Мĕн тума кирлĕ пулнă-ха вĕсем ăна? Урăх алла лекнĕ пулсан, преступлени те пулма пултаратчĕ. Нумаях пулмасть пирĕн сотрудниксем Грузи çыннисене тытса чарчĕç. Вĕсем Раççейрех документсемсĕр çӳренĕ, анчах Муркаш çĕрĕ çинче тин милици аллине лекнĕ. Ку та пирĕн пайра ĕç пахалăхĕ пысăк пулнине кăтартать. Ют çĕр-шыв çыннисене тĕрĕслесех тăратпăр.

**– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем Çурçĕр Кавказа командировкăсене час-часах тухса çӳреççĕ.**

– Çапла. Хальхи вăхăтра та Н. Цветков майор, М. Пугачевпа А. Иванов старшинасем тата В. Бирюков аслă сержант çав вырăнта командировкăра. Пурĕ вара унта пирĕн 37 сотрудник пулчĕ, хăйсен тивĕçĕсене пурнăçларĕ.

**– Паллах, шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем хĕрӳ вырăнсенче хастарлăх кăтартаççĕ. Ĕçре тăрăшулăхпа палăрнисене тата камсене асăнса хăваратăр уяв умĕн?**

– Е.И. Плечов, В.А. Григорьев, К.И. Петров подполковниксене, С.В. Егоров тата О.Н. Потряков капитансене, ытти нумай сотрудниксене те асăнса хăварас килет. Тăрăшулăх, тӳрĕ кăмăллăх кăтартаççĕ вĕсем ĕçре.

Пурне те – шалти ĕçсен пайĕнче халь вăй хуракансене те, йĕрке хуралĕн ветеранĕсене те – професси уявĕ ячĕпе ăшă кăмăлпа саламлатăп. Пĕлетĕп, пирĕн ĕç йывăр, çапах та ăна туса пыма сирĕн вăй-хăват çиттĕр, çирĕп сывлăх пултăр. Çемйĕрсенче те тату пурнăçпа килĕшӳ сунатăп.

**Н. НИКОЛАЕВА**
**калаçнă.**

## Сăмах – сывлăх хуралçине

# В гепатит – хăрушă чир

В гепатит пирки эпир пурте илтнĕ. Пĕрре кăна мар. Анчах мĕнле чир-ха вăл?

Тӳрех каламалла, вируслă гепатит – хăрушă та сарăлакан чир. Хальхи вăхăтра пурĕ 7 тĕслĕ вируслă гепатит паллă: A, B, C, E, Д, F, G. Нумаях пулмасть вара TTV тата SEN ятлисене те тупса палăртнă. Пуринчен ытларах сарăлнисем шутне шăпах В тата С вируслă гепатит кĕрет.

В гепатит вирусĕ пĕвер клеткисене лексе ăна шыçтарать. Вăл юнпа сарăлать, çавăнпа та организма инфекциллĕ юн лексен çеç çынна В гепатит ерме пултарать. Çапла амăшĕнчен ачине, юн янă чухне, ар çыхăнăвĕсем урлă, наркомансем пĕр йĕппе усă курсан, татуировкăсене таса мар инструментсемпе ӳкернĕ тата ытти чухне В гепатит вирусĕ лекме пултарать. Çын чирлине юн анализĕ тăрăх палăртма пулать. Анализ пĕвер шыççи тарăна кайнине (хроническая инфекция), маларах çак чирпе чирленине (перенесенная) тата пĕвер шыççи çук пулсан та организмра вирус пуррине (носительство) тупса палăртма пулăшать. Организмра вирус пулсан вара вăл тепĕр çынна ерме пултарать.

Çак чир СПИД-ран та хăрушăрах, анчах В гепатитран сывалма пулать. Ăна хирĕç кĕрешме вакцина пур.

Чир ернине мĕнле паллăсенчен пĕлме пулать-ха? Чир йывăрах пуçланмасть. 5 çула çитичченхи ачасен вăл чир паллисем палăрмаççĕ те. Чир тарăна кайиччен 2 эрнерен пуçласа 6 уйăх таран иртме пултарать. Организма лекнĕ вируса вара юнра 2-3 эрнеренех тупса палăртма пулать. Анчах çак вăхăтра çын хăйĕн сывлăхĕ хавшанине туймасть. Чир вăраххăн аппетит тата вăй пĕтнинчен, ăш пăтраннинчен тата хăсас килнинчен, сыпăсем тата сылтăм енчи аяк пĕрчисен айĕпе ыратнинчен пуçланать. Тепĕр 2-3 эрнерен шăк тĕксĕмленме, каяшсем тĕссĕрленме пултараççĕ. Ӳте тата куç шуррине сарă тĕс çапма пултарать.

В гепатитпа чирлес мар тесен, йăлара питĕ тирпейлĕ пулмалла: ют çыннăн шăл тасатмалли щеткисемпе, бритвисемпе, мунчалисемпе, расческисемпе усă курмалла мар. Гигиена правилисене çирĕп пăхăнмалла, ар çыхăнăвĕсене кĕнĕ чух сыхланмалла. Пирсинг, хăлха шăтарассине ятарлă учрежденисенче çеç тумалла. Çак чир ерес хăрушлăх пулсан вара прививка туни вырăнлăрах.

**Г. ФЕДОТОВА,**
**районти тĕп больницăн инфекци чирĕсенчен сиплекен врачĕ.**

## Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# «Хĕвел» – сывă пурнăçшăн

Тахçанах кĕтнĕ кĕрхи каникул пуçланчĕ. Ачасем кĕнеке-тетрадьсенчен канаççĕ, анчах кашни кунах шкула чупаççĕ. Вăхăта ахаль irttermeççĕ, «Хĕвелĕн» ăшшипе киленеççĕ. Çакă пĕтĕмпех Атапай шкулĕпе çыхăннă.

Кунта каникул вăхăтĕнче сывлăхпа кану лагерĕ шкул пурнăçне интереслĕрех туса пырать. Сывлăх тенĕрен, эпир, «Хĕвел» лагере юратса çӳрекенсем, пирус туртнипе эрех ĕçни ку таранччен никама та ырă кӳменнине хамăрăн пуççене питĕ лайăх «чикрĕмĕр». «Сывă пурнăçшăн» ятпа агитпрограмма та хатĕрлеме ӳркенмерĕмĕр. Юнашар Ю.Г. Скворцов тата В.Б. Васильева тимлĕ воспитательсем пулни пире хавхалантарсах тăчĕ. Поварсем те кашни кун çав тери тутлă апат хатĕрлесе çитерчĕç. «Çапла вара «Хĕвел» пуррипе ачасем тавра усал шухăшсем явăнма та «вăхăт тупаймарĕç». Аслисем ирсерен ĕçе кайнă пекех, эпир те шкула хаваспах çӳрерĕмĕр.

**Оксана САДОВНИКОВА.**
**Атапай шкулĕ.**

## Конкурс

# Ачасен ӳкерчĕкĕсене кĕтеççĕ

Ачасем ӳкернĕ чи лайăх открыткăсен «АРТ ГОРОД» пĕтĕм тĕнчери пиллĕкмĕш конкурсĕ пуçланнă. Çак конкурса 7-17 çулхи вĕренекенсем хутшăнма пултараççĕ. Конкурс тĕрлĕ номинацисемпе тата икĕ тапхăрпа иртет: пултаруллисене малтан регионсен, кайран Раççей шайĕпе палăртĕç. Конкурс пирки тĕплĕнрех район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕнче ыйтса пĕлме пулать. Информацие www.artcitiez.com сайт çинче те тупма пултаратăр.

**Е. ЧЕРНОВА,**
**район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалисчĕ.**

Халăхран лайăх хакпа ĕне, тына, вăкăр туянатпăр.
Тел.: 68-5-89, 8-909-304-08-81.
5-5.

Продаем с доставкой ячмень, отруби.
Тел.: 8-919-679-96-97.
2-3.

## Пĕлтерӳсем. Объявления

ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, трубы на забор и ворота. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, плодокомбинат). 2-5.

Спутниковые антенны ТРИКОЛОР
с установкой, регистрацией и обслуживанием.
Тел.: 8-905-345-77-19. 5-10.

Февраль уйăхĕнче пăруламалли тынашки сутатăп. Çĕньял Муркаш ялĕ. Тел.: 2-13-77.

Куплю дом с земельным участком недалеко от трассы М 7. Тел.: 48-41-51.

КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4.
Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 5-13.

Спутниковое телевидение
от 3500 рублей, тел.: 8-927-666-93-95.
Спутниковый интернет. 3-20.

Мир окон и дверей
☎29-80-60
ОКНА пластиковые
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
от ведущего производителя Чувашии теперь... в МОРГАУШАХ
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
Здание "СЕЛЬХОЗТЕХНИКА", 2эт
8-927-669-80-60
Набор по уходу за окнами и москитная сетка – в подарок! Скидка до 25 %.

Продаю кирпич: красный одинарный М-100, М-125, М-150, красный полуторный пустотный М-125, силикатный, КББ 20х20х40, керамзит, гравмассу, кирпич половняк. Доставка. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97. 2-9.

13 ноября
с 9-00 до 18-00 часов
в районном Доме культуры только один день состоится распродажа зимней обуви по 300-600 рублей. Гарантия экономии и комфорта.

Внимание!
Только один день – 10 ноября с 10-00 до 17-00 часов в районном Доме культуры безболезненное прокалывание ушей пистолетом. Большой выбор сережек с золотым и серебряным покрытием от 350 до 650 рублей. Прокол 50 рублей. Прокол производится только специальными серьгами.

Куплю одно- или двухкомнатную квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-927-856-17-09.

ООО «Энергосервис», расположенное у д. Москакасы в Ландышах, реализует за наличный и безналичный расчет:
1. Кольца ж/б для колодцев и выгребных ям (услуги по бурению).
2. Столбы оградные ж/б и металлические.
3. А/машину ГАЗ-52 - фургон.
4. А/машину ГАЗ-52 - грузовая.
5. А/машину ГАЗ-53 - на запчасти.
6. А/машину ВАЗ-2101 - на запчасти.
7. А/резину на ГАЗ-53 - в комплекте.
8. Печи банные металлические с котлами.
9. Дом кирпичный 12х12 (эл.энергия, газ, вода) в аренду под жилье.
10. Оказываем услуги по эл.монтажу внутренней и наружной эл.проводки (лицензия 10161 от 2007 года).
11. Реализуем пшеницу, ячмень, овес. Цены ниже рыночных.
Тел.: 8(83541)60-2-39.
Администрация.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ нумай çул хушши хуçалăхăн тĕп бухгалтерĕ, ревкомисси председателĕ пулса ĕçленĕ

**Кронид Артемьевич АРТЕМЬЕВ**

пенсионер, ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Чуманкассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта повар пулса ĕçлекен Г.Г. Семенован

**АМĂШĔ**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Николаева Н.Н.
Номер подписан 07.11.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3608.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.